**Чăваш чĕлхи**

*Лбов юлташа хисеплесе*

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ —
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!
Миçе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн,
Миçе çичĕ ютăн мăшкăлĕ пулса...
Çапах паттăр юлтăн, вăйна çухатмарăн,
Халь те пулин çивĕч, кăвартан таса.
Йăвăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан, —
Пулас пурнăçра та çивĕчпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те кая пулмĕ сан.
Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху.
Аслă Атăл урлă, Атăл шывĕ майĕ,
Вăрман витĕр кайĕ мухтавлă яту;
Кĕсле кĕвви саслă янраттарса кайĕ,
Уйăхăн-хĕвелĕн çунĕ хăвату.
Атăл хумĕсенĕн шавланисене те,
Хă[в]на та ӳстернĕ ват Шупашкара,
Ирĕклĕ çĕршывăн ырă ирĕкне те
Юрă хурса мухтăн асăнса вара.
Сана шанаканĕ, çакна çыраканĕ
Çĕр айĕнче выртĕ тăлăххăн ун чух,
Хăй çийĕнчи çĕрĕ ăна пусса анĕ,
Сан чапна курмашкăн тăма пулас çук...
Ун çинче чăвашăн чĕлхи чапĕ пулĕ,
Тăпри çинче янрĕ ирĕклĕх юрри, —
Вара вилнĕскерĕ канлĕ-канлĕ выртĕ,
Канлĕ, çăмăл пулĕ çийĕнчи тăпри.

*1920 ç. чӳк*
*Шупашкар*

*Çеçпĕл, М. Чăваш чĕлхи : [сăвă] // Çеçпĕл, М. Çырнисен пуххи / М. Çеçпĕл. – 2-мĕш хушса тӳрлетнĕ кăларăм. – Шупашкар, 1989. – С. 94.*